Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă. | N 138 (4707) | 1998 çулхи декабрь (раштав) уйăхĕн 4-мĕшĕ, эрнекун | Палăртнă хакпа.


## Шанчăклă ĕçченсем





*Кăçалхи Тухăç уявĕнче малта пыракан механизаторсен шутĕнче "Надежда" агрофирмăн Якуркел уйрăмĕнчи Петр Васильевич Семеновпа Виктор Леонидович Терентьевăн ячĕсене те асăннă. Вĕсем иккĕшĕ те хуçалăхăн шанчăклă кадрĕсем шутланаççĕ. Петр Васильевич хăйĕн Т-75 тракторĕпе хуçалăхри тĕп ĕçсене пурнăçлать: сухалать, кĕрхи культурăсем акнă çĕре хутшăнать. Акă кăçалхи кĕркунне те вăл 368 гектар çине кĕрхи культурăсем акнă. Ку вăл агрофирмăри чи лайăх кăтарту, çавăншăн ăна тивĕçлĕ парне панă.*

*Виктор Леонидович хăй чĕкĕнтĕр акса ÿстерекен ăстаçă пулнине кăтартнă. Нумай çул хушши чĕкĕнтĕр кăларакан КС-6 комбайнпа ĕçлесе, вăл хăйĕн профессийĕн вăрттăнлăхĕсене пĕтĕмпех пĕлсе çитнĕ. Виктор Леонидович хĕлле тĕп мастерскойра токарь пулса вăй хурать, механизаторсене техника юсама пулăшать.*

*Ÿкерчĕкре: "Надежда" агрофирма механизаторĕсем П.В.Семеновпа (сылтăмра) В.Л.Терентьев.*

*Н.Азизов сăнÿкерчĕкĕ.*

## Инвалидсен вунăкунлăхĕ пырать

### Кăмăл пулсан майсем тупма пулать

Йывăр вăхăт çине йăвантарса, хăш-пĕр чухне эпир хамăрăн чун-чĕресем хытнине те, хамăр тимсĕр пулнине те туймастпăр, халь вара ыркăмăллăх питĕ кирлĕ, анчах, шел пулин те, çакăн çинчен эпир манатпăр.

Çав вăхăтрах тепĕр енлĕ тĕслĕх те пур. Çапла, аш-какай комбиначĕн ветеранĕсем хăйсен ертÿçи çинчен лайăх сăмахсем çеç калаççĕ, тав тăваççĕ. Вĕсем вăл пулăшнине, тимлĕх уйăрнине яланах туяççĕ. Çапла, нумаях пулмасть администраци коллектив договорне чи пĕчĕк пенси илекенсене коммуналлă услугăсен пĕр пайне предприяти шутĕнчен тÿлеме тата кашни кварталта чи пĕчĕк пенсин аллă процентĕ чухлĕ пурлăх енчен пулăшу памалли пунктсем кĕртме шутланă. Комбинат Ватă çынсен кунне çулсерен чаплă лару-тăрура паллă тăвать. Акă кăçал та, октябрĕн 1-мĕшĕнче 70 ытла пенсионера хăналанă. Çаплах вĕсене кашнине 100-шер тенкĕлĕх апат-çимĕç пуххисем панă.

Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен уявĕнче те пенсионерсене ĕçлекенсемпе пĕрле 80-шар тенкĕлĕх апат-çимĕç пуххисем парса савăнтарнă.

Аш-какай комбинатĕнче инвалидсен вунăкунлăхне те тимсĕр хăварман. Декабрĕн 2-мĕшĕнче çак категори çынсем валли столовăйра сĕтелсем хатĕрленĕ, кайран, килĕсене саланнă чухне вĕсене пурне те апат-çимĕçлĕ тата кĕпе-йĕм çумалли хатĕрсемлĕ пакетсем панă. Хăнасем хăйсене çакăн пек пысăк тимлĕх уйăрнипе питĕ кăмăллă пулнă, предприяти ертÿçине тата профсоюз комитетне вĕсем çакăншăн тав тунă.

## Туслăх пултăр çирĕп

Самар облаçĕнче 120 пине яхăн чăваш пурăнать. Вĕсен пурнăçĕ, кăмăл-туйăмĕ еплерех-ши? Шăпах çакăн çинчен каласа пама тата йĕркеленнĕ çыхăнусене çĕнĕ хăват пама Чăваш Ене килсе кайнă та ĕнтĕ Самар облаçĕн делегацийĕн шутĕнче чăваш диаспорин ертÿçисем В.Д.Калмыков, Е.А.Агафова, "Самар ен" хаçатăн тĕп редакторĕ В.А.Григорьева.

Хăнасене Наци библиотекинче кĕтсе илнĕ, çĕнĕ кĕнекесемпе паллаштарнă, чăвашла кĕнекесемпе май пур таран тивĕçтерме шантарă. ЧР культура министрĕн çумĕ Н.Н.Сахаров палăртнă тăрăх, диаспорăсемпе ĕçлесси чылай çÿллĕ шая çĕкленнĕ, ăна тата та вăйлатса аталантарас тĕллевпе патшалăхăн наци политикин концепцийĕн малашнехи программине кĕртсе хăварнă.

**А.ТУМАНОВ.**

### Хаçат çыранакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтерне çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тÿлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

## Декабрĕн 12-мĕшĕ - Хула кунĕ

*Нурлатра пурăнакан хисеплĕ ентешсем, декабрĕн 12-мĕшĕнче ипподром территорийĕнче Хула кунне халалланă пысăк уяв пулать.*

*Программăра:*

*1. Уява чаплă лару-тăрура уçни.*

*2. Спорт ăмăртăвĕсемпе илĕртÿллĕ вăйăсем.*

*3. Раççейри Мускав, Хусан, Анат Кама, Çыранçи Чаллă, Тольятти, Ижевск, Ульяновск, Самар хулисенчи чи вăйлă спортсменсем хутшăннипе Нурлат хулин парнине илессишĕн автомобильсен хĕллехи ăмăртăвĕ.*

*4. Нурлат райповĕ, "Нурлатнефть" НГДУ, чугун çул, вăрман хуçалăхĕн ОРСĕсем, обществăлла апатлану предприятийĕсем, çаплах районти хуçалăхсемпе предприятисем, уйрăм предпринимательсем хутшăннипе ярмăркка.*

***Уяв ирхине 9 сехетре пуçланать.***

*Пĕр кун маларах, декабрĕн 11-мĕшĕнче автомобильсен ăмăртăвне хутшăнакансене суйласа илмелли ăмăрту пулать.*

*Нурлатра пурăнакансемпе хăнасем! Хула кунне сире ырă сунса кĕтетпĕр.*

## Тутарстан Республикинчи чĕлхесем пирки

Нумаях пулмасть ТР Патшалăх Канашĕ, Министрсен Кабинечĕ, Тутарстан Республикинчи Наукăсен академийĕн Г.Ибрагимов ячĕпе хисепленекен чĕлхе, литература тата искусство институчĕ пуçарăвĕпе Хусанта "Тутарстан Республикинчи чĕлхе вырăнĕ: паянхи шайĕ тата пуласлăхĕ" ятлă наукăпа практика конференцийĕ иртрĕ. Вăл пилĕк секцине пайланчĕ.

Патшалăх Канашĕн ларусен Пĕчĕк залĕнче республикăра тата хуласемпе регионсенче тухакан хаçатсемпе журналсен редакторĕсем пухăнчĕç. Ку секцине ТР хыпарпа пичет министрĕ И.Г.Ахметзянов тата Патшалăх Канашĕн культурăпа наци ыйтăвĕсем енĕпе ялан ĕçлекен комиссин пуçлăхĕ Р.М.Миннуллин ертсе пычĕç.

И.Г.Ахметзянов ĕçе пуçласа сăмах каларĕ. Пирĕн республикăра чылай нацисем пурăннă май вăл ТР патшалăх чĕлхи мĕнле пулмалли çинчен хăйĕн шухăшĕсене пĕлтерчĕ.

Ун хыççăн патшалăх "Татарстан" телерадиокомпани пуçлăхĕ И.Ю.Аминов доклад турĕ. Вăл асăннă телерадиокомпанинче тутар чĕлхипе тухакан кăларăмсене аталантарасси пирки каларĕ. Вăхăт çитнĕ, терĕ вăл, тутарла тухакан уйрăм канал пулмалла. Паллах, кунта укçа кирлĕ. Ăна тупмалла, мĕншĕн тесен халăха уйрăм канал кирлех.

Секцинче Тутарстан Республикин çыхăну министрĕн çумĕ С.Г.Хакимзянов, "Таткиновидеопрокат" директорĕ Р.С.Насыбуллин, "Магариф" издательствăн директорĕ М.Х.Валеев, ТР Наукăсен академийĕн тата Хусанти патшалăх университечĕн пĕрлештернĕ лабораторийĕн наука ĕçченĕ М.Н.Халиуллин, "Донья" радиостудин редакторĕ Р.С.Валеев, "Республика Татарстан" хаçат редакторĕ Е.А.Лисин сăмах каларĕç.

Ку секцинче Нурлат типографин директорĕ Р.Н.Абзипаров докладне уйрăммăн палăртас килет, мĕншĕн тесен вăл чăваш чĕлхи çинчен чылай каларĕ. Районта хаçат виçĕ чĕлхепе тухать: тутарла, вырăсла, чăвашла. Тутарсемпе чăвашсем юнашар пурăнакан ялсенче икĕ халăх та пĕр-пĕрин чĕлхине тата вырăсла пĕлеççĕ. Ку тĕрĕс сăмах. Чĕлхесем ытларах пĕлни Тутарстан Республикин наци политикине хăвăртрах аталантарма пулăшать.

**А.ИВАНОВ.**

### Официаллă

## Тутарстан Республикин территорийĕнчен илсе тухма юраман апат-çимĕç таварĕсене сутмалли, пĕтермелли тата усă курмалли йĕрке çинчен

*Халăха апат-çимĕçпе тăтăшах тивĕçтерсе тăрас тĕллевпе ТР Министрсен Кабинечĕ 1998 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнчи 843 номерлĕ распоряженипе Тутарстан Республикинчен илсе тухма юраман тытса чарнă таварсене сутмалли йĕрке çинчен Вăхăтлăх инструкци çирĕплетнĕ.*

Вăхăтлăх инструкципе пăхса хăварнă тăрăх апат-çимĕç таварĕсене ТР МВД, санэпиднадзорăн Патшалăх комитечĕн, ТР Министрсен Кабинечĕн Ветеринарин тĕп управленийĕн полномочи панă çыннисем тытса чарма пултараççĕ.

Тутарстан республикин территорийĕнчен илсе тухма юраман апат-çимĕç таварĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

**аш-какай продукчĕсем,**
**сĕт продукчĕсем,**
**маргарин,**
**ӳсентăран çăвĕ,**
**çăнăх,**
**макарон изделийĕсем,**
**сахăр,**
**чей,**
**ача-пăча апачĕ,**
**тăвар,**
**пулă тата пулă продукчĕсем,**
**килти выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк (чĕрĕ виçепе).**

Апат-çимĕç таварĕсене илсе тухакансене тытса чарсан протокол çыраççĕ.

Протоколта çакна палăртмалла: хăш вăхăтра тата хăш вырăнта çырнă; протокол çыракан çыннăн должноçĕ, хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, йĕркене пăсакан çинчен пĕлтерекен сведенисем, унăн адресĕ, расчет счечĕ; тытса чарнă продукци çинчен пĕлтерекен сведенисем (мĕнле тавар, шучĕ, виçи, продукци единицин хакĕ, продукцин пĕрлехи хакĕ).

Протокола çыракан тата апат-çимĕç таварне илсе тухакан ала пусаççĕ. Апат-çимĕç таварне илсе каякан çын протокол çумне ăнлантару тата протокол тĕлĕшпе асăрхаттару хучĕ тăратма, çаплах алă пусма хирĕçленин сăлтавĕсене те çырса кăтартма пултарать.

Тытса чарнă продукцие, унăн пахалăхне, ăçта туса кăларнине, хăрушсăрлăхне çирĕплетекен документсем иличчен, çаплах тивĕçлĕ экспертиза ирттериччен хулапа район администрацийĕ палăртнă уйрăм складсене упрама памалла. Мĕнле продукци пулнине тата мĕнле экспертиза ирттернине шута илсе патшалăх контроль (патшалăх ветнадзорĕн, патшалăх суту-илӳ инспекцийĕн, патшалăх санэпиднадзорĕн тата ытти) органĕн представителĕ лаборатори тишкерĕвне яма вăтам проба суйласа илет.

Апат-çимĕç таварĕсем пахалăх требованийĕсемпе килĕшсе тăмасан, заключенисене тĕпе хурса çак таварсене ĕçлесе хатĕрлеме е пĕтерме тивĕçлĕ.

Лайăх пахалăхлă продукцие хуласемпе районсен администрацийĕсем палăртнă ваккăн суту-илӳ тăвакан предприятисем сутĕç.

Тытса чарнă продукцие ĕçлесе хатĕрлеме е сутма пурлăх опиçĕн акчĕпе килĕшӳллĕн йышăнаççĕ. Актра продукцин шутне, хакне, хуçана куçармалли сумма кăтартаççĕ. Ĕçлесе хатĕрлеме е сутма янă продукцийĕн хакне палăртнă йĕркепе, ĕçлесе хатĕрлемелли е сутмалли тăкаксене шута илсе палăртаççĕ.

Продукцие ĕçлесе хатĕрлеме е пĕтерме патшалăх санэпиднадзорĕн е патшалăх ветнадзорĕн органĕсен постановленийĕпе килĕшӳллĕн параççĕ.

Ĕçлесе хатĕрлеме е сутма панă апат-çимĕç таварĕсемшĕн укçана ĕçлесе хатĕрленĕ е сутнă хыççăн 5 кун иртиччен унăн хуçин расчет счечĕ çине куçармалла е палăртнă адреспа ярса памалла.

Çынсен сывлăхĕшĕн е пурнăçĕшĕн хăрушă, сутма е промышленность предприятийĕсенче ĕçлесе хатĕрлеме юраман апат-çимĕçе пĕтермелле. Çиме юрăхсăр, çаплах çынсен сывлăхĕшĕн е пурнăçĕшĕн хăрушă апат-çимĕç таварĕсен хакне хуçисене тӳлемеççĕ. Çакăн пек чухне çиме юрăхсăр е çынсен сывлăхĕшĕн тата пурнăçĕшĕн хăрушă продукцийĕн хуçине вĕсене пĕтернин тăкакĕсене саплаштарма май тупма пултараççĕ.

Продукцие ятарлă комисси, хула, район администрацийĕ çирĕплетнĕскер, пĕтерет.

Продукцие пĕтернĕ тĕлĕшпе акт çыраççĕ. Унта мĕнле йышши апат-çимĕç таварĕ пулнине, шутне палăртаççĕ. Продукцие пĕтернĕ тĕлĕшпе çырнă акта комиссин мĕнпур членĕсем алă пусаççĕ.

Тытса чарнă продукцие Раççей Федерацийĕн тата Тутарстан Республикин çутçанталăкне сыхламалли законсен требованийĕсене пăхăнса пĕтереççĕ.

## 16 ТУЛТАРТĂН ПУЛСАН

Юлашки çулсенче патшалăх шайĕнче тĕрлĕ законсем тата нормативлă актсем йышăннă, вĕсем Раççей граждансен прависемпе ирĕклĕхне тивеççĕ.

Тĕпрен илсен, 1997 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче Президент “Раççей Федерацийĕн территорийĕнчи Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнине çирĕплетекен тĕп документ çинчен” Указ кăларнă, 1997 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнче вара РФ правительстви РФ гражданинĕн паспорт йĕркине çирĕплетмелли, бланк ĕлки, паспорт çырмалли, памалли, улăштармалли йĕрке, учета илесси тата паспортсене мĕнле упрамалли çинчен постановлени йышăннă.

Ку законсенче, паспорт вăл РФ территорийĕнче РФ гражданинĕ пулнине çирплетекен тĕп документ. РФ территорийĕнче 14 çула çитнĕ кашни çыннăн паспорт пулмалла.

Пирĕн патра 14 çула çитнисене мĕншĕн паспорт памаççĕ тесе чылай ыйту параççĕ тата шăнкăравлаççĕ. Тутарстан - Раççей составĕнче суверенлă республика пулни паллă ĕнтĕ, çавăнпа та Раççей правительствипе Тутарстан хушшинче договор туса, законпа килĕшӳллĕн хăш-пĕр полномочисемпе ыйтусене Тутарстан республикине панă. Çавна пула Тутарстан Патшалăх Канашĕ “Тутарстан Республикин гражданстви çинчен” закона йышăниччен пирĕн республикăра Раççей граждансене паспорт парассине чарма решени йышăннă. Çавăнпа та эпир кивĕ ĕлкеллĕ Раççей Федерацийĕн гражданствине пĕлтернĕ паллăпа 16 çултан паспортсем паратпăр, ку документсем 2005 çулччен вăйра пулĕç. Апла пулсан, пирĕн Республикăра пурăнакансем 16 çула çитсен пурте паспорт илмелле. Паспорт илес тесен, коммуналлă хваттерсенче пурăнакансен хăçан çуралнине çирĕплетекен свидетельствăна, 6х7 см виçĕ сăнӳкерчĕке, пурăннă вырăнта регистрациленĕшĕн госпошлина тӳлени çинчен квитанцие пурăнакан вырăнти çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха памалла, паспорта хăйне вара Нурлатри ГРОВДри паспортпа виза службин уйрăмĕнче илмелле. Уйрăм çуртсенче пурăнакансем вара çак документсемпех тата паспорт пама ыйтса çырнă заявленипе йышăну кунĕсенче тата сехечĕсенче ОПВСа пымалла.

Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсене, шкулсемпе ПТУсен администрацийĕсене çапла калас килет. Час-часах паспорт илес тесе пирĕн пата вĕренме е ĕçлеме каяс умĕн юлашки кунсенче çеç пыраççĕ. Паспорт питĕ кирлĕ документ, çавăнпа та ăна çырма вăхăт кирлĕ.

Эпир çаплах хулари пĕрремĕш тата тăваттăмĕш номерлĕ шкулсен администрацийĕсем паспортсене чаплă лару-тăрура парас йăлана çĕнетессе шанатпăр. Тен, çак йăлана ытти шкулсен коллективĕсенче те пурнăçа кĕртме тытăнĕç.

**М.ГИРФАНОВ,**
**Нурлатри ГРОВД ОПВС начальникĕ, милици майорĕ.**

## М.Ш.Шаймиев Индие кайса килнĕ

Тутарстан Республикин Президент пресс-центрĕ çапла пĕлтернĕ. Ноябрĕн 22-мĕшĕнче М.Шаймиев Инди Республикине тухса кайнă. Вăл ертсе пыракан делегацие республикăн Правительство членĕсем, район администрацийĕн, промышленность пысăк предприятисен пуçлăхĕсем, банкирсем, искусство ĕççенĕсем, журналистсем кĕнĕ.

ИТАР-ТАСС, “Татаринформ” пĕлтернĕ тăрăх, Тутарстан делегацийĕ ноябрĕн 23-мĕшĕнче Делине çитнĕ.

Индира Ганди ячĕллĕ аэропортра ăна Инди Правительстви членĕсем кĕтсе илнĕ. Кунтах Раççейĕн Индири посолĕ Альберт Чернышев пулнă.

Тутарстан компанийĕсене Индире аван пĕлеççĕ. Эпир Индипе кооперацилле çыхăнусем аталантарассипе интересленетпĕр, тенĕ М.Шаймиев.

Тутарстан президенчĕ кашни çул иртекен суту-илӳпе промышленность выставкинче пулнă. Кăçал çак выставка вунсаккăрмĕш хут пуханнă. Пĕр эрнере кунта 2,5 миллион индиец пулнă. Куракансем Тутарстанăн нефтьпе хими промышленноçĕн, авиаци предприятийĕсен, “КамАЗ”, пысăк компанисен продукцийĕсемпе интересленеççĕ.

М.Шаймиев Инди вице-президенчĕпе Кришна Кантпа тĕл пулнă. Вăл Тутарстан Президентне кĕмĕл чашăк панă. М.Шаймиев К.Канта тутарсен наци костюмĕпе çĕлĕк парнеленĕ.

ТР Президенчĕ М.Шаймиев Инди вице-президентне К.Канта Тутарстан Республикине визитпа пыма чĕннĕ, чĕнĕве пархатарлă йышăннă.

## Санăн çыннусем, ял

*Хресченсен хуçалăхĕсен “Кондурча” ассоциацийĕн доярки Нафина Сагитовна Абзалимова кăçал районти ултă пин килограмм сĕт суса илекенсен шутне кĕме пултарать. Çакна кăçалхи вунă уйăх хушшинче вăл пĕр ĕнерен вăтамран 5526 килограмм сĕт суса илни те çирĕплетет. Халь те, выльăхсем витере чухне, продукци илессине чакарас темест. Çакăн пек результатсем тума мĕнле пултарнă-ха вăл? Çак ыйту çине Нафина хăй тата унăн тантăшĕсем çеç хуравлама пултарĕç. Элкел районĕнче çуралса ӳснĕскер, вăл Анат Нурлатри яша качча тухнă. Унăн сутуçă профессине выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен профессипе улăштарма тӳр килнĕ.*



*Акă 18 çул ĕнтĕ мăшăрĕпе Газинурпа вĕсем хуçалăхри ĕне ферминче ĕçлеççĕ. Çак çулсем хушшинче вăл пуян опыт пухнă, Нафина çулран çул малта пыракансен шутĕнче пулни те ахальтен мар, кăтартăвĕсем вара лайăхлансах пыраççĕ.*

*Унăн çемье пурнăçĕ те телейлĕ, хунямăшĕпе туслă пурăнаççĕ, мăшăрĕпе Газинурпа икĕ ача ӳстереççĕ.*

*Ырă кăмăллă, лăпкă Нафина çынсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлет, ял çыннисем ăна хисеплеççĕ.*

*Н.Азизовăн сăнӳкерчĕкĕнче хресченсен хуçалăхĕсен “Кондурча” ассоциацийĕн доярки Н.С.Абзалимова.*

### Коллектив тата унăн ертӳçи

# ЫВĂЛĔ АШШĔНЕ ТИВĔÇЛĔ

**Танзил Кабирович шутланă тăрăх, вăл ăнсăртран нефтяник пулман. Çакă никама та тĕлĕнтермен пулĕ. Мĕнле калас, урăхла пулма та пултарайман. Хĕрĕх çул нефтяник пулса ĕçленĕ, тава тивĕçлĕ нефтяникăн, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕн Кабир Гарафутдинович Мусинăн ывăлĕсем урăх ĕç суйласа илнĕ пулсан çылăх пулнă пулĕччĕ. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле тĕрлĕ çĕрте пурăнса курнă Танзил, ашшĕ хăйĕн профессийĕпе пурнăçĕ тăршшĕпех мăнкăмăлланнине халь те астăвать-ха. Вăл ашшĕнчен нумай вĕреннĕ. Кабир пичче (халь вилнĕ ĕнтĕ) çакăн пек калама юратнă, нефтяникăн ĕçре кирлĕ виçĕ пахалăх пулмалла: чăтăмлăх, сывлăх тата этемлĕх. Танзил Кабирович ĕçлеме тытăннă пĕрремĕш кунранах, çак йывăр ĕçе пурнăçлакан çынсемшĕн юлашки малтанхи иккĕшĕнчен кирлĕрех пулнине палăртнă. Халь вара Танзил Кабировичăн пурнăçĕнче ыркăмăллăх, çынна хисеплени пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннине çирĕппĕнех калама пулать. Вăл пурте хисеплекен ертӳçĕ пулса тăнă.**



Филиалти ертсе пыракансем хушшинче (унта ытларах арçынсем ĕçлеççĕ), хальхи вăхăтра этемлĕх тата тӳр кăмăллăх сайра тĕл пулакан пахалăхсемлĕ çынсем пурри тĕлĕнтерчĕ. Тата та ытларах, Танзил Кабирович ертсе пыракан организацире пурте çавăн пек пулнă, кунта туслă та тĕллевлĕ коллектив йĕркеленнĕ.

"Лениногорскри тампонаж ĕçĕсен управленийĕ" ООО Нурлатри филиалĕ 1997 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăннă, анчах та вăл пушă вырăнта мар, "ТН-Нурлатнефтешырав" ООО тампонаж цехĕн бази çинче йĕркеленнĕ, çав вăхăт тĕлне Т.К.Мусин ертсе пыракан пулса 16 çул ĕçленĕ пулнă ĕнтĕ. Унччен вăл Лениногорскри нефть техникумĕнчен вĕренсе тухнă, кайран тампонаж цехне ĕçе вырнаçнăскер, цементлакан агрегат машинисчĕ, скважинăсене çирĕплетекен аслă инженер пулса вăй хунă, çав вăхăтрах профессие вăрттăнлăхĕсене алла илнипе пĕрлех, вăл çынсене ĕçре ертсе пыма та вĕреннĕ.

Кĕскен каласан, юлашки тĕлĕшпе унăн нихăçан та йывăрлăх пулман. Вăл йĕркеллĕ тата тӳрĕ кăмăллă çын пулнине пĕлсе çынсем хăйсем ун патне туртăннă, канаш ыйтма пынă. Çавăнпа та филиал йĕркеленĕ чухне начальник тивĕçĕн кандидатури пĕрре кăна пулнă: Т.К.Мусин.

Уйрăмăн тампонажникĕсене предприяти мĕнпе пулăшнă-ха? Чи малтан, унăн интересĕсене пăхăнса тăманскерсем пулса, вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тытăннă. Вĕсен хăйсене ĕçре кăтартмалли май тупăннă. Урăхла пулнă пулсан, хальхи йывăр, нефть кăларассин калăпăшĕ чакнă вăхăтра, тампонажниксем уçăмсăр пурнăçпа пурăннă пулĕччĕç. Хăйсем тĕллĕн пурăнма тытăнса вĕсем хăйсене çунат хушнă пек туйнă. Пĕрремĕшĕнчен, услугăсем парасси анлăланнă. Заказчиксем хушшинче эпир пĕлекен "ТН-Нурлатнефтешырав" ООО, "Нурлатнефть" НГДУсăр пуçне, çаплах "Татнефтепромăн" Зузеевăри НГДУ тата çамрăккисем, ура çинче çирĕп тăракан "РИТЭК-нефть" НГДУ. Юлашкипе ĕçлĕ çыхăнусем кунсерен çирĕпленеççĕ, заказчиксем ыйтнипе тампонажниксем вĕсене транспорт услугисем те пама тытăннă. Лениногорскра та вĕсен активлăхне, çак йывăр вăхăтра та хăйсен ĕçне усăллă йĕркелеме пултарнине мухтаççĕ çеç. Çавăнпа та Нурлат филиалне малта пыракан коллективсен шутĕнче асăнма тытăннă, ертсе пыраканăн ĕçĕ те ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Филиалăн ĕç специфики те çавах юлнă: скважинăсене цементласа çирĕплетесси, тасатакан шĕвексене уçласси, скважинăсене пресласси тата çуса тасатасси. Цементлакан агрегатсен моторисчĕсем, цемент хутăштаракан агрегатсен машинисчĕсем, водительсем кунта тĕп професси çыннисем шутланаççĕ. Инженерсемпе техниксем пулса кунта 5 çын вăй хурать. Коллектив 65 çынна пĕрлештерсе тăрать, кунта 15-20 çул стажлăскерсем ĕçлеççĕ, чи кирли, вĕсем пурте нефтяниксем пулса ĕçленисен ывăлĕсем пулни Танзил Кабирович çакна ăнсăртран мар уйрăммăн палăртса хăварать, мĕншĕн тесен, ĕçе парăннин тата яваплăх туйса пурнăçланин пĕлтерĕшĕ ытти пахалăхсенчен кирлĕрех. Çакăн пек ĕçченсен шутне пĕртăвансем Николайпа Александр Токмаковсем, Евгенийпе Владимир Стрельниковсем, çаплах Александр Кругловпа Константин Кудряшов кĕреççĕ. Начальник вĕсем нефтяник ĕçне парăннине пысăка хурса хаклать. Çав вăхăтрах А.А.Смирнов, В.А.Жуков, С.Г.Булыгин мотористсем, В.А.Шатров машинист, цемент турттаракан машина водителĕ В.А.Алексеев, автобус шоферĕ В.П.Сидимиров коллективра хăйсен вырăнĕсене тупнă. Кĕскен каласан, коллективăн кашни членĕ çинчен вăл чылай вăхăт хушши мăнкăмăлланса каласа пама пултарать. "Нуретдиныч тетĕр-и? (кунта ертсе пыракан инженера Роберт Зайнуллина çапла чĕнеççĕ). Вăл питĕ хăватлă технолог. Пирĕн системăра 30 çул ĕçлет. Заказчиксемпе ĕçлесси унран нумай килет. Вăл чи малтан ĕçе вăхăтлă, паха пурнăçлас тесе тăрăшать".

"Минахмет Валимухамметович Кабиров инженер-механикăн аллинче 34 техника, вĕсенчен ытларахăшĕ - ятарлисем. Вăл питĕ ăслă та тирпейлĕ специалист".

"Скважинăсене çирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен инженер Асхат Сулейманович Закиров пирĕн патра иккĕмĕш çул çеç ĕçлет-ха. Анчах та пирĕн пата килнĕ чухнех унăн опычĕ пысăкчĕ, унăн яваплăхне хăть кам та ăмсанма пултарать".

Лениногорскри тампонажниксем те Танзил Кабировичпа ĕçлеме тӳр килнине ăнăçлăх тесе шутлаççĕ.

- Ĕçре тĕрли пулать, анчах та тавлашасси, çынна кӳрентересси вара пирĕн патра нихăçан та пулман. Мĕнле лару-тăрура та эпир Танзил Кабировичăн шанăçне тӳрре кăларма тăрăшатпăр, - теççĕ вĕсем.

Коллективра ĕçлекен çынсем уншăн ахаль ĕçченсем, ку е тепĕр тивĕçсемлĕ специалистсем çеç мар, хăйсен ыйтăвĕсемпе, нушисемпе çывăхланнăскерсем, ертӳçĕ вара вĕсен ыйтăвĕсене вăй çитнĕ таран татса пама тăрăшать. Хăвăрах шутлăр-ха: начальниксенчен кам хăйĕн ĕçченĕн сывлăхĕпе кăсăкланса больницăна каять-ха? Танзил Кабирович вара коллектив членĕ больницăна лексен иккĕмĕш кунах ун патне кайса килме тăрăшать.

Тампонажниксем хăйсен ертӳçи питĕ таравтлă та ырă кăмăллă, çаплах лайăх мăшăр тата атте пулни çинчен мăнкăмăлланса каласа пачĕç. Ертсе пыракан пулнине пăхмасăр, вăл хăй начальник пулнине нихăçан та палăртасшăн тăрăшмасть. Вăл мĕнпуринпе уççăн калаçаканскер, ĕçлеме тытăнакансене кăмăлпах пулăшаканскер. Ытти отрасльсенчи пекех, кунта "ЛУТР" ООО Нурлат филиалĕнче ĕçре çĕнĕ меслетсемпе усă курма тăрăшаççĕ. Сăмахран, цементланă çĕрте технологи кăтартăвĕсене икĕ хут лайăхлатакан, хутăштаракан емкоçпа усă курма тытăннă. Çавăн пек чухне Танзил Кабирович яланах çĕннишĕн тăрăшать, çĕнĕлĕхсемшĕн савăнать. Филиал задание пурнăçламан тĕслĕх пулман-ха: çапла кăçалхи 10 уйăхра тампонаж ĕçĕсен планне 113 процент пурнăçланă, ку вăл "ЛУТР" ООО чи пысăк кăтарту. Т.К.Мусин заказчиксемпе ĕçлĕ çыхăну тытать тата ăна сыхласа хăварас тесе тăрăшать. Çак тĕллеве пурнăçлассинче коллектив вăйне шанать. Мĕншĕн тесен, нефтяниксен вак-тĕвек ĕç пулманнине лайăх пĕлет, çавăнпа та тӳрĕ кăмăлпа, ырми-канми ĕçлеме хистет. Ашшĕ - Кабир Гарафутдинович çапла шутланă, халь вара хăй те çапла шутлать. Çапла, шăп кăна çавăн пек. Нумаях пулмасть "Лениногорскри тампонаж ĕçĕсен управленийĕн" ООО Нурлатри филиалĕн начальникне Танзил Кабирович Мусина ТР Президенчĕн Указĕпе "Тутарстан Республикин тава тивĕçлĕ нефтяникĕ" хисеплĕ ят панă. Танзил Кабирович вара çакна ашшĕ çинчен аса илтерекен паллă, тепĕр енчен, ашшĕпе ывăлĕ Мусинсем хăйсен мĕнпур пурнăçне халалланă тӳр кăмăллăхпа ĕçе парăннине хакланă пек йышăннă. Хăй йĕркеллĕ пулнăшăн, çынна юратнăшăн вăл тахçанах пысăк паллă илнĕ: ку вăл çынсем юратни, хисеплени.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.**

---

## Ĕç ăнса пырать

"Черемшан" агрофирмăн "Салтакъелĕнчи уйрăмĕнче ял хуçалăх техникине, уйрăмах çаклатса ярса ĕçлемелли инвентаре çуркунне тĕлне тăрăшса хатĕрлеççĕ. Юсав мастерскойĕнчи мĕнпур цехсенче ĕç хĕрсе пырать. Олег Матвеев, Вячеслав Егоров, Александр Прокопьев тимĕрçĕсем сӳресем юсаççĕ пулсан, ытти механизаторсем Валерийпе Анатолий Васильевсем сеялкăсене майлаççĕ, Владимир Семеновпа Сергей Галанцев вара культиваторсене юсаççĕ. Анатолий Павлов сварщик та механизаторсен заказĕсене тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшать. Кĕскен каласан, мастерскойра ĕçлеме мĕнпур условисем пур.

**Р.МУЛЛИН.**



*Çак кунсенче "Урняк" хуçалăх ĕçченĕсем çăкăр пĕçермелли электрокăмака туянса Пӳлеркӳлĕнчи столовăйра вырнаçтарнă, кунта пĕчĕк пекарня уçма хатĕрленеççĕ. Çамрăк ĕçченсем П.В.Ворсинапа Н.В.Лялюкова (сăнӳкерчĕкре) хальхи вăхăтра çăкăр пĕçерес ĕç вăрттăнлăхĕсене алла илеççĕ, кăмакапа тĕрĕс усă курма вĕренеççĕ. Ку кăмакара тӳрех 30 буханка пĕçерме пулать. Вĕсем халлĕхе çăкăрпа столовăя, шкулпа ача садне тивĕçтерме шутлаççĕ, малашне вара ял халăхĕ валли те пĕçерĕç.*

*Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*

---

## Сухан пачах хуртланмасть

Хăвăл сухана чылай пахчаçă килĕштерет. Ăна ытлашши пăхма та кирлĕ мар, тăпрана тиркемест, касна хыççăн хăвăрт ӳсет. Анчах та çак ӳсентăранăн пĕр çитменлĕх пур: ăна тымар хурчĕ тапăнать. Çавна май сухан çулран-çул сайралать, 2-4 çултан пачах ӳсме пăрахать.

Пахчаçăсем хăйсен опытне шута илсе сухана тăвар шывĕпе шăварма сĕнеççĕ. Малтанах 10 литр шывра 300 грамм тăвар ирĕлтерсе унпа 2 тăваткал метр лаптăка шăвараççĕ. Тепĕр 10-15 кунран пĕр витре шывра 500 грамм тăвар ирĕлтерсе шăвармалла. Тепĕр çавăн чухлĕ вăхăтран тăвар виçине 750 грама çитерме сĕнеççĕ.

Кашни тăвар шывĕпе шăварнă хыççăн тепĕр хут 2-3 витре таса шывпа шăвармалла.

Севок сухан йăранĕсене те çапла майпах "апатлантарма" пулать. Çу каçипе виçĕ хут шăварса илмелле. Çакăнпа сухан тути те, пахалăхĕ те улшăнмасть, тăвар ӳсме пулăшать кăна.

## Этикет

# “Кăмăлпа панă парнен хакĕ çук”

Юлташăн çуралнă кун - мĕнле парне памалла-ха ăна? Тăвансĕм туя чĕнеççĕ - çамрăк мăшăра мĕн парнелемелле? Çĕнĕ çул уявĕ çывхарать, тăвансене кăшт тимлĕх уйăрас килет. Отпуск вăхăтĕнче канма тинĕс хĕрне каятăр - эсир унта сувенирсем, мăшăрăрпа ачăрсем валли парнесем шыратăр. Сирĕн начальникăн юбилей - мĕн парнелесе ун кăмăлне çĕклемелле-ха?

Парне сăмах йăлана кĕнĕ. Эпир унпа ялан усă куратпăр. Çывăх çын: “Эпĕ сана валли парне хатĕрлерĕм” тесен, сирĕншĕн ку питĕ кăмăллă, сире юратни, сирĕн çинчен шухăшлани туйăнать.

Парнен пĕлтерĕшĕ хитре сăмахсенчен хаклăрах. Парне мĕнле япала пулмалла-ха? Усăллă, хаклă е кирлĕ? Япалах çапла пулмалла мар ĕнтĕ, анчах та парне паракан çын унăн хуçине мĕн килĕшнине шута илмелле. Парнен усăллăхне тĕрлĕрен ăнланма пулать. Перчетке те, духи те, кĕнеке те, чечек те, ӳкерчĕк те хăйне евĕрлĕ усăллă. Анчах та перчетке пĕчĕккĕ пулсан, духи вара килĕшмесен вĕсен усси, паллах, çук.

Парнен хакĕ ниме те пĕлтермест, вăл сирĕн майсенчен килет ĕнтĕ. Анчах та хăвăра та хаклă япала илсе парайман çынсене çавăн пек парне памалла мар, вĕсем хăйсене лайăх мар туйĕç. Хаклă парнене пĕр çын кăна пани парăмлă хăварнă пек пулать. Хăш-пĕр чухне темиçе çын пуçтарăнса холодильник, телевизор, пылесос, кĕпе-йĕм çăвакан машина тата ытти хаклă япаласем парнелеççĕ. Кун пек парнесем туйра, çĕнĕ çурт уявĕнче, юбилейра параççĕ.

Парнене кăмăла каякан япала çеç суйласа илмелле. Анчах та хăшĕн? Параканнин е илекеннин? Вĕсен кăмăл туртăмĕ пачах урăхла пулсан? Çавăнпа та парне суйланă чухне питĕ тимлĕ пулмалла, парне хăвна та, юлташна та килĕштĕр.

Хăть мĕнле япала та парне пама юрăхлă-и? Кунта вара тăван-и, юлташ-и, миçе çулта пулнине, ăçта ĕçленине, ун интересне шута илмелле.

Кĕнеке чи лайăх парне шутланать: ăна хăть кама та, хăть мĕнле сăлтавпа та пама пулать. Кĕнеке туянма питĕ çăмăл, анчах парне валли ăна суйласа илме çăмăлах мар, ăна тивĕçлĕ çыннăн интересĕсемпе кăмăлне пĕлмелле.

Чечек те уйрăмах лайăх парне: виçĕ, пилĕк, çичĕ штук. Розăпа гвоздикăна пĕрер те парнелеме пулать. Чечексене пурте килĕштереççĕ. Кашни чечек хăйне уйрăм хитре, çавăнпа тата хăшĕ илемлĕрех пулнине калама йывăр. Çынна вăл юратнă чечек парнелĕр - унăн шăрши те кăмăлне кайĕ. Чечеке уявсенче çеç мар, сăлтавсăр парнелесен те çын савăнать.

Хăть мĕнле парнене те хитре капăрлатмалла. Ăна йышăннă май тав тума ан манăр, хăвăра килĕшмесен те çакна ан палăртăр, юлташăрсен кăмăлне ан пăсăр.

Н.ТАРАСОВА.

Улма-çырла питĕ ăнса пулнăран е вăйлă çилтăвăл вăхăтĕнче те çимĕç йывăçĕсен турачĕсем чĕрĕлсе анма пултараççĕ. Вĕсене тепĕр хут вырнаçтарма йывăр е пачах май çук. Чĕрĕлнĕ вырăнти сурана тасатма та йывăр, вăл час “ӳт илмест”. Ревсем парса хăйĕн вырăнне вырнаçтармалла, пăявпа çыхса пăтапа çапса лартмалла. Сурана сад варĕпе сĕрмелле. Пăта таса пулмалла, унта тутăхнă вырăн пачах пулмалла мар. Çапса лартас умĕн ăна 2-3 минут хушши вĕрекен шывра тытмалла е де-

## Пăта - “тухтăр”

Çавна май унта сиенлĕ микробсем пухăнаççĕ, çав вырăн çĕрет, йывăç та хăрса ларать.

Ăнса çимĕç паракан çакнашкал йывăçа çĕнĕрен лартса чĕртме сахал мар вăхăт кирлĕ. Çавăнпа та сад “сывлăхĕ” мĕнле пулнине асăрхасах тăмалла.

Турат чĕрĕлсе анчĕ пулсан, мĕн тумалла-ха? Сад ăстисем çапларах тума сĕнеççĕ: турата тĕзинфекцилемелли пĕрпĕр япалапа шăлса тасатмалла. Пăта тăршшĕ чĕрĕлнĕ туратăн хулăнăшĕнчен вăрăм пулмалла мар, çапса лартнă хыççăн унăн вĕçĕ туратăн тепĕр енчен те тухса тăмалла мар. Пăта çапнă вырăна та сад варĕпе сĕрмелле. Кĕркунне, суран “ӳт илсен”, тĕревсене пуçтарса илме те юрать.

## Савни

*Хĕвел тухсассăн ирхине*
*Сар кайăксем юрлаççĕ.*
*Савни, чунтан юратнине*
*Сана епле калас-ши?*

*Тухаттăн эс ман куç умне,*
*Сăпайлăн калаçаттăн.*
*Эс тыткăнланă чĕрене*
*Аваннине туяттăм.*

*Лараттăн юнашар манпа,*
*Куçран савса пăхаттăн,*
*Пылак, çемçе сăмахупа*
*Чуна эс тыткăнлаттăн.*

*Çут çăлтăрсем çине пăхсан*
*Чăп! чуп туса илеттĕн.*
*Çинçе пилĕкĕмрен тытсан*
*Çӳл тӳпенех вĕçеттĕм.*

*Тулли çут уйăх тӳпере*
*Ăс панăн туйăнатчĕ:*
*“Эх, çакăн пек хитре хĕре*
*Сан вĕçертес марччĕ”.*



## Пушă сăмах мар вăл “пусă çаврăнăшĕ”

Çур енне, сад-пахчара ĕçсем пуçланас умĕн пусă çаврăнăшĕ пирки час-часах сăмах пуçаратпăр-ха. Тĕрĕссипе вара, çакăн çинчен хĕллехи вăхăтра сăмах пулни вырăнлăрах пулĕ. Хăш культурăна ăçта вырнаçтарасси, хăшĕсем хăйсен кӳршисене “килĕштерни е килĕштерменни” пирки халех, вăрлăхсем хатĕрленĕ , туяннă вăхăтрах пĕлсе тăрсан аванрах.

Кашни ӳсен-тăранăн хăйĕн шăрши пулнине, вăл тĕрлĕрен хытă тата шĕвек япаласем кăларнине, вĕсем кӳршĕ ӳсен-тăрана витĕм кӳме пултарнине пĕлетпĕр эпир.

Çакăн пирки наука татăклă сăмахне калайман-ха, ятарлă пособисем те çук, çапах та опытпа сăнавсем пире хăш-пĕр япаласем çинчен каласа пама пултараççĕ.

Çĕр çырли йăранĕсене, сăмахран, хăмла çырлипе юнашар вырнаçтарма юрамасть, мĕншĕн тесен вĕсене пĕрешкел сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем тапăнаççĕ.

Çамрăк улмуççисем çĕр улми ани çинче начар ӳсеççĕ, вĕсем унран сиенлĕ токсинсем пухаççĕ, çавна май азот виçи чакать, фотосинтез арканать.

Улма-çырла йывăççисене сирень, палан, роза ӳсме чăрманатараççĕ. Çавăнпа вĕсене улмуççисемпе грушăран айккинерех вырнаçтармалла.

Çынсем мĕн авалтанах иçĕм йывăççипе юнашар купăста ӳстерме юраманнине асăрханă. Купăста шăршинчен иçĕм турачĕ аяккалла “тарса” ӳсет.

Пĕр вырăнтах темиçе çул сухан ӳстермелле мар, мĕншĕн тесен çав вырăнти тăпра нематодăпа чирлет. Купăста тăтăшах лартса ӳстернĕ çĕрте çĕр йӳçекленет, тухăç чакать.

Купăста пăрçа йышши культурăсемпе сухан хыççăн, çĕр улми вара купăстапа сухан, ыхра хыççăн лайăх ӳсет.

Сухан вырăнĕнче кăшман, хăяр, баклажан ăнса пулать.

Фитофтора чирĕ сарăласран кишĕр, укроп, петрушка, купăста, салат нумай пулăшаççĕ. Çак культурăсем хыççăн помидорпа çĕр улми лайăх çитĕнеççĕ.

Хăяр, сухан, хĕрлĕ кăшман йăранĕсене çарăкпа йӳç кăшман йăранĕсемпе юнашар вырнаçтарма юрать.

Кишĕр, петрушка, сельдерей хыççăн хăярпа çĕр улми хăвăрт, тухăçлă ӳсеççĕ.

Хăяр хыççăн сухан, çĕр улми е помидор лартсан аван.

Ыхра вырăнĕнче кишĕр, хăяр, помидор, çĕр улми тухăçлă пулаççĕ.

Çĕр улмипе юнашар кавăн акма юрамасть. Кавăн вырăнĕнче вара тепĕр çул çĕр улми, купăста, ытти тымар çимĕçсем лайăх ӳсеççĕ.


## Пĕлтерӳсем

### *Сутатпăр:*

*Упаковкăри çĕвĕ çĕлемелли çĕнĕ машина (алăпа). Телефон:5-22-73.*

* * *

*Южный тăкăрлăкĕнчи 1-мĕш çуртри 2-мĕш номерлĕ 3 пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон:5-42-90.*

* * *

*Искусственнăй çĕнĕ кĕрĕк. Телефон: 5-16-58.*

* * *

*Советская урамĕнчи 193-мĕш номерлĕ çуртра пĕр пӳлĕмлĕ хваттер, 2-мĕш хут. Телефон: 5-42-38.*

### *Тĕрли:*

*Атă-пушмак васкавлă юсатпăр (53-мĕш СМУ çурчĕ). Лицензи серийĕ В-98 060431N*

* * *

*Çĕнĕ çул парнисем, 35 тенкĕрен тытăнса. Телефон:5-39-39.*

* * *

*Зеленодольск хулинчи пĕр пӳлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчипе улăштаратăп. Телефон: 2-29-24.*

* * *

*Мускавран килнĕ çемье виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер вăрах вăхăта тара илет. Хула варринче, АТП патĕнче пулсан лайăх пулмалла. Телефон: 2-19-84.*

### *Тупнă япаласен сĕтелĕ*

*Хаким Аглиуллович Шаймарданов ячĕпе панă паспорт тупнă. Пухтел ялĕнчи Еруслановран ыйтса пĕлмелле.*

**К.Маркс урамĕнчи 51а çуртра (перекет банкĕпе Çамрăксен центрĕ хушшинче) вырнаçнă “Евразия” суту-илӳ центрĕ Сире теле, видео, аудио, йăла техникин тĕнчине чĕнет. Сутлăхра - цĕтĕм тĕнчипе паллă “Сони”, “Панасоник”, “Самсунг”, “Шарп”, “Тошиба” фирмăсем туса кăларнă техника, вĕсем тĕнчере чи пахисем. Сире кашни кун 9.00 сехетрен тытăнса 18.00 сехетчен кĕтетпĕр. 13.00 сехетрен тытăнса 14.00 сехетчен - апат вăхăчĕ. Телефон: 2-14-30.**



Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çыrусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4652